Черетлĕ информаци кунĕнчен

# Патшалăх политикин тĕп ыйтăвĕсемпе

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

ЧР шалти ĕçсен министрĕн çумĕ С.Н. Белоусов палăртнă тăрăх, хальхи вăхăтра преступленисенчен ытларахăшĕ ют çын пурлăхне вăрлани-çаратнипе çыхăннă. Кашни 3 преступленирен пĕри вара унта çул çитмен çамрăк хутшăннипе пулнă. Кăçал кăна ятарласа вĕлернисем тата çаратнисем 6-шар тĕслĕх, вăрланисем 311 тĕслĕх, улталанисем 7 тĕслĕх пулнă. Çул çитменнисем 33 преступление ӳсĕрле тунă.

Хальхи вăхăтра милицин шкулти инспекторĕсен штачĕсене çирĕплетес ыйту тăрать. Хальлĕхе вĕсене хулари шкулсенче туса хураççĕ. Ун чухне шкул ачисенчен укçа тапăнса ыйтнă тĕслĕхсем те сахалрах пулĕç. Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса кашни шкултах хурал тăрассине йĕркеленĕ.

Хуласенче милици органĕсемпе тӳрремĕн çыхăнмалли пунктсем 26 йĕркеленĕ, 31 видеокамера вырнаçтарнă. Кун пек камерăсене ытти пĕчĕк предприятисем çывăхĕнче вырнаçтарсан та ытлашши мар. Çакă вăл преступленисене ӳсса парассине ӳстерме пулăшĕ çеç.

Ачасем хутшăннипе çулсем çинче 141 инкек пулнă,12-ĕн вилнĕ, 142-ĕн аманнă. Нумай чухне вĕсем çуран çӳрекенсен айăпĕпе те пулаççĕ. Ачасем умĕнче чи малтанах аслисен, ашшĕ-амăшĕн çул-йĕр правилисене пăхăнассипе тĕслĕх пулса тăрас пулать.

Мăн Сĕнтĕрте татса памалли ыйтусем, çынсене кăсăклантараканнисем çук мар. Хальхи вăхăтра ял тăрăхĕсем хушшинчи пушар чаçĕсене йĕркелеме тытăннă май пушар чаçĕн ĕçне тивĕçлипе йĕркелесси, шалти ĕçсен пайĕн милици пунктне йĕркелесси ыйтусем çуратаççĕ. Муркаш районĕ тăрăх шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.И. Плечов ăнлантарнă тăрăх, çурта юсас ĕçсем пыраççĕ, октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса милици пункчĕ ĕçлеме тытăнмалла. Кунпа пĕрлех çавна та палăртса хăварас пулать. Хальхи вăхăтра вара хуласенче районсенчи, ытти уйрăм пĕчĕкрех районсенчи шалти ĕçсен пайĕсене пĕрлештерес ыйту та тăрать.



Мăн Сĕнтĕрте вара милици пункчĕ хута кайнă май патрульпе пост служби те, участковăй та, ĕçсене пăхса тухмалли пӳлĕм те, пункт пуçлăхĕ те пулĕç.

Тĕл пулусенче ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.П. Мазиков вырăнти лару-тăрупа паллаштарчĕ. Вăл ăнлантарнă тăрăх, территорире 2 шкулпа 5 клуб учрежденийĕ, 2 библиотека, шкулсенче спорт залĕсем пур. Кашни шкултах профилактика канашĕсене йĕркеленĕ. Ыйтусене оперативлă татса пама майсем пур.

Урамсене çĕрлехи вăхăтра çутатса тăрасси, водопровод пирки те ыйтусем çук мар. 5 ялти çулсене йĕркелеме май килнĕ пулсан, тепĕр 4 ялта çулсене çав шая çитермеллех.

Ыйтусем пирки калас пулсан, Мăн Хураçкара çул тăвасси çивĕч тăрать. Токшик ялĕнче шыв çукки чылайăшне канăçсăрлантарать. Плотинăсене тивĕçлĕ шайра тытса тăрасси те паянхи ыйтăвах.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.П. Мазиков палăртнипе, Ватă çынсен кунне тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илес пулать. Шкул ачисен те çак ĕçрен айккинче юлмалла мар.

Шкул ачисемпе çыхăннă преступленисем шутĕнче хальхи вăхăтра кĕсье телефонĕсене вăрланин тĕслĕхĕсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Кунта кашнийĕнех тимлĕрех пулни кирлĕ.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче иртернĕ тĕл пулура Муркаш районĕ тăрăх ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.И. Плечов шкул ачисене тимлĕрех пулма, кам та пулин пăрахса хăварнă сумкăсем, ытти япаласем пирки вăхăтра пĕлтерме сĕнчĕ.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çавна та палăртрĕ. Малалла пăхаканăн ĕçлес пулать. Ĕçлемесĕр май çук. Малашлăха пăхса ĕçлесен кăна çитĕнӳсем тума май пур. Çармăс Республикинчи Горномарийски районĕнчи ĕçтешсене ку енĕпе ырă енпе палăртмалла. Уйрăм çынсем кунта çĕр участокĕсем илсе пахча çимĕç, тымар çимĕç ӳстерсе хăйсен пурлăх шайне ӳстереççĕ.

Тротуарсен ыйтăвĕ пирки калас пулсан, вĕсем тивĕçлĕ шайра пулманни вăрттăнлăх мар. Ачасен хăш-пĕр чухне автомашинăсем çӳремелли çулпа çӳреме тивет. Ку ыйтăва та малашлăхра татса пама май килĕ.

Урамсенче вара çутă хунарĕсене вырнаçтарасси тата вĕсемпе усă курасси ыйтусем кăларса тăратать. Ку тĕлĕшпе пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ тата ял тăрăхĕн администрацийĕ пĕрле килĕшсе ĕçлени кирлĕ.

Юлашкинчен Муркаш районĕ тăрăх шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.И. Плечов аслă классенчен вĕренсе тухакансене шалти ĕçсен пайне ĕçлеме пыма йыхравларĕ. Çирĕп сывлăхлă пулни, судпа айăпланманни, йĕркеллĕ характеристика пулни кунта тĕп критерисем шутланаççĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: тĕл пулу вăхăтĕнче.**

Çемье ыйтăвĕсемпе

# Йăлтах çынран килет

***Эрне кунпа шăмат кун урам хушшипе кăшкăртса чупакан туй машинисене курсан, чун-чĕрере темле ăнланмалла мар пăлханулла туйăм чупса иртет. Кам çамрăклăхне аса илсе ассăн сывлать, кам – çак телейлĕ самант çулсем иртнĕ май уйрăлупа вĕçленнĕшĕн. Çамрăксем вара хăçан та пулсан çакăн пек кун хăйсен пурнăçĕнче те пуласса ĕмĕтленеççĕ.***

***Çак ĕмĕт çитнĕ çамрăк мăшăра вара хĕрӳ юратăва ĕмĕр-ĕмĕр упрама сĕнеççĕ туя пынă тăванĕсемпе юлташĕсем. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе, ăнланса пурăнма ырлăх-сывлăх сунаççĕ, çын сăмахне итлемелле марри, пĕр-пĕрне каçарма пĕлни çемьере мĕн тери кирлине аса илтереççĕ.***

***Анчах мĕншĕн-ха пыра-киле шур пĕркенчĕк айĕнче ларнă юратнă çынпа ӳплере те çăтмахри пеккине ĕненнĕ хĕрпе мăшăрне мĕн пурнăç тăршшĕпех алă çинче йăтса çӳреме хатĕр каччăн çак туйăмсем чакса пыраççĕ?***

***Туйăмсем çирĕпех пулаймарĕç-ши? Е пурнăç тутимасине пĕлсе çитеймен çамрăклăхра айăпĕ?***

***Районти ЗАГС пайĕн заведующийĕ М.П. РУБЦОВА каланă тăрăх, пĕрлешекенсенчен ытларахăшĕ – 18-24 çулхисем.***

– Кăçал пĕрлешме кăмăл тунă çамрăксенчен 100 хĕрпе 78 каччă шăпах çак ӳсĕмрисем пулчĕç. 8 уйăхра районта 139 çемье чăмăртанчĕ. Иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, 14 туй ытларах пулчĕ. Çавăн пекех 25-34 çулхисем те, 35 çултан аслăраххисем те пур.

Пурнăçра, паллах, кашни хăйĕн телейне тупма ĕмĕтленет. Кăçал пĕрлешекенсенчен те 14 арçынпа 12 хĕрарăм çĕнĕрен çемье чăмăртарĕ.

**– Маргарита Петровна, эсир çак ĕçре ĕçлеме пуçланăранпа кĕçех 24 çул çитет. Ку енĕпе опыт та пысăк сирĕн. Мĕнрен килет хаваслă туй кĕрлевĕ çулсем иртнĕçемĕн е хăшĕсен вăхăт кăштах иртсенех çемьери чашăк-тирĕк шакăртатнипе ылмашăнни? Çамрăк пулни, пурнăçа ăнланса çитерейменни айăплă-ши кунта?**

– Кунта çамрăклăх пĕтĕмпех айăплă тесе калас килмест. Йăлтах çынран килет пулĕ. Ĕлĕкрех пулсан, хĕрпе каччăн куçĕсенченех палăратчĕ вĕсем пĕр-пĕрне юратни. Паян вара заявлени пама пырсан та каччи хĕрне: «Эс çыр, эс каччă тухасшăн вĕт»,– тени те пулать. Шухăшлатăп вара çакăн пек чухне кусем йĕркеллех пурăнайĕç-ши тесе.

Пурнăç çине çăмăлттайла пăхни пулать-ши ку? Заявлени бланкĕ çинче малтан пулас мăшăрсем ăçта ĕçлени çинчен çырмалли вырăн пурччĕ, халь çук вăл. Пĕррехинче çапла ыйтатăп заявлени пама пынă хĕрпе каччăран:

– Ăçта ĕçлетĕр?– тетĕп.

Ниçта та, – теççĕ иккĕшĕ те.

– Вара мĕнле пурăнас тетĕр, – тесессĕн каччи çапла çавăрттарса хучĕ:

– Аттепе анне тата мĕншĕн?

Вăт çакăн пек мăшăр ăçтанха пурнăç тума пултартăр тесе шутлатăн вара. Çемьелленсен те ашшĕ-амăшĕн ĕнси çинчен анасшăн мар хăшĕсем.

Темле тĕслĕх те тĕл пулать.

– Ăçта çырса хунă качча тухакан хĕре тумтирне йăлтах каччăн илсе памалла тесе, – терĕ пĕррехинче авланакан каччăн амăшĕ. – Пĕр вăкăр пусрăм та унпа халь те туй тумалла, те хĕрне тумлантармалла, – тет çаксекер.

– ЗАГСра çапла каларĕç, - тенĕ ăна ывăлĕ.

– Пирĕншĕн хĕрпе каччă мĕн тăхăнни мар, чи кирли – вĕсем пĕрле пурăнма кăмăл туни, - тетĕп хĕрарăма. – Эпир апла каламастпăр, - тетĕп.

Каччи ниçта та ĕçлемест иккен. Авланма пуçласан ашшĕ-амăшне çакăн пек йывăрлăха кĕртсе ӳкерекенсем те тĕл пулаççĕ.

Çемьере тата çемье пуçĕ кирлĕ пек.

Авланакан каччă ЗАГСа заявлени пама пынă чух калаçма тепĕр çынна илсе пыни те иккĕленӳ çуратать. Пурнăç тилхепине çемьере кама парĕ-ши ку тесе шутлатăн вара ирĕксĕрех.

Пурнăç улшăннинче-ши сăлтавĕ, е пурнăçри хаклăхсене çухатса пыратпăр, – калама хĕн. Анчах та юлашки вăхăтра çемьесенче арăмĕсем пурнăç тилхепине тытса пынă пек туйăнать.

**– Маргарита Петровна, Сирĕн ĕçре хăвăр пата пыракан çынсен пурнăçне хăвăр чĕре витĕр кăларма тивет. Вĕсен пурнăçĕн пĕр пайне вĕсемпе пĕрле пурăнма тивет. Çырăнтарнă чухне каланă чуна пырса тивекен сăмахсемсĕр пуçне лару-тăрăва кура сĕнӳ панă самантсем те пулаççĕ пулĕ-ха.**

– Тем те пулать. Пĕррехинче заявлени пама каччи ӳсĕр килчĕ. Хĕрĕ банка патшалăх пошлинине тӳлеме кайсан, çакскертен «ĕçкелетĕн-имха» тесе ыйтрăм.

– Ĕçетĕп те, туртатăп та, – терĕ çакскер темле паттăрла ĕç тунă пек.

Пĕрле пурăнма пуçличчен вăл йăлтах йĕркеллĕ пурăнассăн туйăнать. Анчах та сĕмсĕр çын вăл сĕмсĕрленсех пырать.

– Ĕçнĕшĕн халь каçаратăн. Кайран мĕн пулать вара, – тетĕп хĕре асăрханса.

Чăнах та нумаях пĕрле пурăнаймарĕç вĕсем.

Тепрехинче пĕр хĕр макăрса килсе кĕчĕ.

– Паян ман савни авланать. Ан çырăнтарăр, тархасшăн, – тет.

– Пĕрлешме калаçса татăлтăмăр. Туй кĕпине те пĕрлех суйларăмăр. Нумаях пулмасть юлташĕн туйĕнче урăх хĕрпе паллашнă та халь ăна качча илет, – ĕсĕклесех йĕрет хĕр. – Куçĕнчен пăхма килтĕм кунта, – тет.

– Мĕн пулни йăлтах лайăха пулать, – тетĕп ăна. – Сан савăнмалла вăл хăйне хăвăр пĕрлешиччененх çакăн пек кăтартнăшăн. Енчен те туй хыççăн урăххипе çыхланса кайнă пулсан тата та йывăртарах пулатчĕ вĕт, – тетĕп.

Лăплантарса кăларса ятăм ăна.

Пĕр хĕрпе пĕрлешме шутланă хыççăн теприпе пĕрлешекен çын вăл çирĕп çын-и вара? Хăй сăмахне тытман арçынна ĕмĕр тăршшĕпе мĕнле шанса пурăнмалла?

Чăнах та, çак çемье те нумай тытăнса тăраймарĕ.

**Каласа хăвармалла. Кăçалхи 8 уйăхра 57 çемье саланчĕ. Пĕлтĕрхинчен ытларах ку: иртнĕ çул вĕсен йышĕ 51 пулнăччĕ. Маргарита Петровнăна кунта та çамрăксен çăмăлттайлăхĕ пăшăрхантарать:**

– Ачу ашшĕсĕр юлать вĕт, – тетĕп çамрăк арçынна.

– Ман ача анчах ашшĕсĕр çитĕнет-им? Патшалăх мĕн тума вара? Патшалăх ӳстерет, – тет.

Хитре уйрăлса каякансем те пур. Пĕр мăшăр килчĕ уйрăлма. Пĕр-пĕрне юратни, пĕр-пĕриншĕн тăрăшни, çунса тăни те куç умĕнчех. Нумай çул пурăнса та алла ача тытса курайман вĕсем. Камра сăлтавĕ? Камăн ача пулмасть? Çаксkерсем пĕр-пĕринпе хăйсене айккинче тĕрĕслеме калаçса татăлаççĕ.

– Мăшăрăма хытă юратнăран хама ирĕккĕнех тытаймарăм. Упăшкан тепĕр хĕрарăмпа ача пулчĕ, – йĕрет хĕрарăм.

Мăшăрĕн ача пулнине пĕлсен вăл ăна çапла каланă:

– Мĕншĕн сан ачан ашшĕсĕр ӳсмелле. Санăн ачупа, ачан амăшĕпех пурăнмалла, – тенĕ.

Уйрăлма тортпа, шампанскипе килчĕç. Хĕрарăм чарăнайми йĕрет.

–Мĕншĕн уйрăлатăр. Пĕрлех пурăнăр эппин. Ачине ашшĕ укçа парса пулăшĕ, – тет архив заведующийĕ. Ун чух мăшăрланмалли ятарлă зал пулман.

– Укçапа ачана воспитани параймастăн, - терĕ хĕрарăм.

Унтан мăшăрне çапла карĕ:

– Ачуна пăхса çитĕнтериччен те кĕтме хатĕр эп сана, – терĕ.

Вăт мĕнле чун-чĕреллĕ çынсем пулаççĕ. Мăшăрне темĕнле хытă юратсан та ăна урăх çемьене кайма хăех сĕнет.

Мĕн тери илемлĕ, пуян чун-чĕреллĕ пулмалла çакна валли. Çын пулмалла.

Тĕрлĕрен çынсем пур çав. Тĕрлĕрен уйрăлакансем те. Тепĕр арçын арăмне пирĕн умрах хĕнеме пуçларĕ. Аран чартăмăр.

– Уйрăлатпăр та, ман ăшчикре тулса çитнине кам çинче кăлармалла. Тата урăх хăçан хĕнес ăна ман, - тет.

**– Çемьесем саланнинче тата çын сăмахĕ, вĕсем хушша-хуппа кĕни те айăплă пулĕ. Эсир мĕнле шутлатăр?**

– Кун пекки те тем чухлех. Хăшĕсем çамрăксем пĕрлешиччненех хушша-хуппа кĕме пуçлаççĕ. Ашшĕ-амăшĕ вĕсенчен заявлени ан йышăнăр-ха, текенсем те пур.

Пĕррехинче ЗАГСа хĕрĕн амăшĕ килчĕ. Тархасшăн, ан çырăнтарăр. Вăл каччă мĕнле çемьерине лайăх пĕлетĕп, – тет çаксер.

– Пирĕн ун пек тума право çук. 18 çул тултарнă хĕрпе каччă хăйсен пурнăçне хăйсене килĕшнĕ пек йĕркелеме пултараççĕ. Ашшĕ-амăшĕшĕн ачисем айăплă мар. Чăтса ирттермелле, Мана хама та хуняма илтересшĕн пулман, - тетĕп.

Чăнах та, çак мăшăр халĕ те килĕштерсех пурăнать.

Çын сăмахĕ хăй йĕрне хăварать çав. Пĕр мăшăр пĕрлешсен çулталăкранах уйрăлчĕ.

– Утă çулма пĕлмест, ăна тума пĕлмест, кăна тумасть,– йĕркипе каласа кайрĕ хăйхискер арăмĕн çитменлĕхĕсене.

– Ку сан сăмахсем мар вĕт, аннӳн сăмахĕсем, – тетĕп.

– Çапла, аннене те килĕшмест вăл, – тет.

– Мĕн чухлĕ укçа тăкрăр туй ирттерсе, халăх пуçтарсах туй турăр вĕт-ха, – тетĕп.

– Вĕсен мĕн кулянмалли? Ĕçрĕç, çирĕç. Пирĕн туй вара ку генеральнăй репетици пулчĕ, – тесе çавăрттарса хучĕ.

Çын шăпи, мăшăрĕн пурнăçне хуçса хăварни ку арçынна пĕрре те пăшăрхантармасть иккен.

**– Маргарита Петровна, Ырă йăласен залĕнче çавăн пекех тем тĕрлĕ мероприяти те ирттеретĕр. Çемьесенче мĕнле пурăнни унта та курăнать пулĕ.**

– Пĕр-пĕринпе нумай çул пурăнакан мăшăрсемпе, тĕрлĕ ăрури çемьесемпе тĕл пулусем ирттеретпĕр. Ачасене хаваслă лару-тăрура регистрацилетпĕр тата ытти те. Калаçнинченех палăрать вăл вăл е ку çемьере мĕнле пурăнни. Ыйту парсан, хăшĕ сăмах каланинченех. Çав çын çемьере йăлтах йĕркелесе пыни курăнать. Мăшăрсем пĕр-пĕрне пӳлсе калаçаççĕ пулсан, кунта вара килĕшӳлĕх курăнсах каймасть. Çемьере пĕр тан правallă пулмалла тетпĕр теха. Пурнăç опытĕнчен илсе çакна калама пултаратăп: пĕр тан правallă пулма çăмăл мар. Çемьере хăшĕ те пулин ертсе пыратех.

Çавăн пекех ачасем çуралнине регистрацилетпĕр, çынсем вилнине те. Çаксем йăлтах чун витĕр тухаççĕ. Амăшĕ ывăлĕ вилнине документ çыртарма килет. Ывăлĕн çулĕсем пулсан та, вăл унщăн – ача. Хамăр пата килекенсен хуйхи-суйхине, савăнăçне хамăр витĕр кăларатпăр. Çынсемпе ĕçлетпĕр пулсан, вĕсен пурнăçĕпе пурăнма тивет. Килти çинчен манатпăр ĕçре. Юрататăп хамăн ĕçе.

Районта вилекенсен йышĕ çуралакансенчен нумайрах пулни вара канăç памасть. Кăçалхи 8 уйăхра 259 ача хăй çут тĕнчене килни çинчен сас панă пулсан, 429-ăн пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлнă.

Мĕн тесен те, пурнăçра ырри ытларах пултăрччĕ. Пĕр-пĕринпе ыpă кăмăллă пулма, пĕр-пĕрне пурăннă чух упрама укçа-тенкĕ кирлĕ мар вĕт. Çапла тума кăмăл çеç кирлĕ. Вăл вара сирĕн пурин те иксĕлми пултăрччĕ.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**